**"Радиохум – хаçат страницинче. Ыйту пур. Хуравне пĕлесшĕнччĕ"**

# Çурт юсама – патшалăх пулăшăвĕ

***Уйрăм категорие кĕрекен граждансем пирĕн çĕршывра тĕрлĕрен çăмăллăхсене тивĕçеççĕ. Тĕслĕхрен, çар служащийĕсен çемье членĕсен, çемьене тăрантараканĕ вилнĕ пулсан, хăйсен пурăнмалли çурчĕсене юсама федераллă бюджетран укçан пулăшу илме право пур. Çак йĕрке çинчен тĕплĕнрех каласа пама ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçинчен Н.П. ПЕТРОВАРАН.***

**– Нина Пантелеевна, çак çăмăллăхпа усă курма право пуррисен шутне камсем кĕреççĕ?**

– Асăннă çăмăллăхпа çар службиче вăхăтĕнче вилнĕ çар служащийĕсен çемье членĕсем усă курма пултараççĕ. Çав шутран призывпа действительнăй çар службинче пулнă чух вилнĕ çар çыннисен çемье членĕсем те. Çак категорие çавăн пекех контрактпа çар службинче пулнă тата çар службинчен çар службинче пулмалли вăхăт тухнă хыççăн киле таврăнсан, сывлăха пула е йĕркелӳпе штат мероприятийĕсене пула вилнĕ çар служащийĕсен çемье членĕсем те кĕреççĕ, енчен те çар служащийĕсем службăра тăнă пĕтĕмĕшле вăхăт 20 е ытларах çулпа танлашать пулсан.

Палăртмалла, çак çăмăллăхпа унпа усă курма право пур çемье членĕсем çурт хăйсем çинче пулсан кăна усă курма пултараççĕ.

**– Камсем-ха вĕсем асăннă çар служащийĕсен çемье членĕсем?**

– Чи малтанах вĕсем шутне тăлăх арăмсем кĕреççĕ, енчен те вĕсем çĕнĕрен урăх çемье çавăрман пулсан. Çавăн пекех вилнĕ çар служащийĕн çул çитмен ачисем тата 18 çул тултаричченех инвалид пулса тăнă 18 çултан иртнĕ ачисем те кĕреççĕ. Çар служащийĕсен ачисем очно майпа вĕренеççĕ пулсан, 23 çула çитиччен çак çăмăллăхпа усă курма пултараççĕ. Çавăн пекех вилнĕ çар служащийĕн иждивенийĕ çинче пурăннисен те çӳлерех асăннă çăмăллăхпа усă курма право пур.

**– Нина Пантелеевна, асăннă категорие кĕрекенсем çак çăмăллăхпа час-час усă курма пултараççĕ-и е ку тĕлĕшпе уйрăм вăхăт палăртнă?**

– Вилнĕ çар служащийĕсен çемье членĕсем харпăр хăй çуртне юсамалли йышăнăва хăйсем ирĕккĕн йышăнаççĕ, анчах та юсав ĕçĕсене федераллă бюджет шайĕнчен иртterме пур правăпа 10 çулта пĕр хутчен çеç усă курма пултараççĕ.

**– Миçе тенкĕ таран илме пулать çак пулăшăва?**

–Ку укçан суммине палăртнă чух çаксене шута илеççĕ: çемьере миçен пурăннине, çуртăн пĕтĕмĕшле лаптăкне, хамăр республикăра пурăнмалли çуртăн пĕр тăваткал метрне юсама вăтамран миçе тенке ларнине.

Палăртмалла, пурăнмалли çуртăн пĕтĕмĕшле лаптăкĕн норми пĕччен пурăнакан çыншăн 33 тăв. метрпа танлашать. 2 çынран тăракан çемьешĕн вăл 42 тăв. метрпа, 3 е ытларах çынран тăракан çемьешĕн кашни çын пуçне 18 тăваткал метр пулать.

Харпăр хăй çурчĕн пĕтĕмĕшле лаптăкĕнчен пĕр тăваткал метра юсама кирлĕ вăтам сумма вара Чăваш Республикинче кăçал 4284 тенкĕпе танлашать.

**– Асăннă çăмăллăхпа усă курма право пур çынсен унпа усă курас тесен ăçта каймалла тата мĕнле документсем тăратмалла?**

– Ку çăмăллăхпа тивĕçтерес ĕçе социаллă хӳтлĕх пайĕ туса пырать. Çавăнпа та харпăр хăй пурăнакан çуртне патшалăх шучĕпе юсама право пур граждансен пирĕн пата çак документсене тăратмалла:

1) çурта юсама укçа-тенкĕ ыйтса çырнă заявлени; 2) пурăнмалли çурт хăй çинче иккенне кăтартакан кирлĕ йĕркепе çирĕплетнĕ документ копийĕ; 3) çуртăн техника паспорчĕн копийĕ (вăл çук пулсан, ял тăрăхĕн администрацийĕнчен панă çурта хăçан лартнине кăтартакан справка); 4) асăннă çăмăллăхпа усă курма право пуррине çирĕплетекен справка копийĕ (çар комиссариатĕнчен параççĕ); 5) çемьери кашни çыннăн паспорчĕсен е çурални çинчен калакан свидетельство копийĕсем; 6) 18 çултан иртнĕ инвалид-ачасен 18 çула çитиччен инвалид пулса тăнине çирĕплетекен справка; 7) 23 çула çитичченхи ачасен вăл е ку вĕренӳ заведенийĕнче очно майпа вĕреннине çирĕплетекен справка; 8) çурт кĕнекинчен çырса илни е çуртра камсем пурăннине çирĕплетекен справка.

**– Çак документсене районти социаллă хӳтлĕх пайне хăçанччен тăратмалла?**

– Çитес çул çак çăмăллăхпа усă курас тесен, документсене кăçалхи декабрĕн 20-мĕшĕччен тăратмалла.

**-Тавах, Нина Пантелеевна, калаçушăн.**

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

**Милици хроники**

## Аннесем хӳтлĕхе, тимлĕхе тивĕç

Атте-анне, асатте-асанне ĕмĕрĕсенче анне чи сăвапли шутланнă, ăна сивĕ сăмахпа та кӳрентермен. Апла пулсан мĕншĕнха хальхи вăхăтра ăна килтен кăларса яни, хĕнени тата ытти пирки те тăтăшах илтме тӳр килет. Нивушлĕ эпир хамăра пурнăç парнелекенсене пачах та хаклама пĕлместпĕр?

Акă çак тĕслĕхри çын хисепе, арçын ятне тивĕç-ши тата? Çук паллах! Мĕншĕн тесен унăн хăтланăвĕ ытла та чыссăрла. Шетмĕпуç ялĕнчи Солнечная урамри пĕр çуртра хирĕçӳ тухнă. 44 çулхи вăй питти арçын 74 çулхи амăшĕпе вăй виçме шутланă. Ватăскерне тĕртсе ярать, çапла майпа амăшĕ сулăнса каять, бетон картлашка çинелле ӳкет, пуçĕпе алăка çапăнать. Йывăр суранланнăскерне Муркашри тĕп больницăн хирурги уйрăмне илсе çитерме тивет. 44 çулхискерĕн вĕресе тăракан вăйне хуçалăхри ĕçĕнче усă курнă пулсан, чылай сăваплăрах пулнă пулĕччĕ. Халĕ вара çăмăлттай пирки РФ УК 112 ст. уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать.

## Тăхтамансем пит нумай!

Чăн-чăн Тăхтаман ĕмĕрĕ пырать тейĕн. Кĕçех хĕрсем мăшăрланма та шикленекен пулĕç пулĕ. Ара арçынсем ытла та çынсăрла хăтланаççĕ вĕт е вĕсене мăйракаллă арçури тейĕн. Кашни кунах шалти ĕçсен пайĕн дежурнăй уйрăмне упăшкасем хĕненĕ пирки шăнкăравлаççĕ, хăшĕсем вара шăнкăравлама та шикленеççĕ. Ара, кайран, пӳтсĕрскер, татах та хытăрах хĕнет вĕт. Эй, мăнтарăн хĕрарăмĕсем, йăлтах тӳсеççĕ вĕт. Çитменнине упăшка ыран ĕçрен ӳсĕр таврăнсан, пӳрте кĕртсе вырттармалла, пылчăк тумтирне улăштармалла, вĕри яшкине вĕрсе сыптармалла е тата кăра çилли аслати пулса таврăниччен пӳртри ачапа сив мунчара чĕтресе лармалла. Апла пулсан хĕрарăм умĕнче арçынсен пуç таймалла! Çапах та хăш-пĕр пӳтсĕре асăнар-ха. Уйкас Хачăк ялĕнчи Тĕп урамăн пĕр çуртĕнчи арçын ир-ирех яшка пĕçернĕшĕн, выльăх-чĕрлĕх пăхнăшăн арăмне "тав" тума тытăннă. 44 çулхи упăшки 37 çулхи арăмне хĕненĕ.

Атапай ялĕнчи Атапай урамĕнчи пĕр çуртăн кил картинче çавра çил тухса кайнă, апла пулсан ырринех кĕтме çук. Каллех 44 çулхи намăссăр хăйĕнчен тăватă çул кĕçĕнрех арăмĕпе пуçтахланма хăтланнă. Ăна тапса, çапса хĕненĕ.

Кораккасси ялĕнче те çавăн йышши тĕслĕхех палăрнă. Çĕнĕ урамра пурăнакан 39 çулхи арăмне алăпа кăна мар, патакпа çапса хĕненĕ. Суранланнăскерне Муркашри тĕп больницăн хирурги уйрăмне илсе çитерме тивнĕ.

Пĕр пăтăрмахран тепри хăрушăрах. Вĕсене тишкернĕ май ирĕксĕрех пуçра "мĕнле çĕршывра тата саманара пурăнатпăр-ши эпир" текен шухăш явăнать.

Иштерек ялĕнчи Çурçĕр урамĕнчи пĕр хуçалăхри 31 çулхискерне çĕр-анне еплерех чăтса тăрать-ши тата? Вăл çак урамри пĕр хуçалăха килет те арăмĕпе хирĕçӳ кăларать. 31 çулхи арăмне питĕнчен çапать, çӳçĕнчен тытса пӳрт тăрăх сĕтĕрет.

Çакăн хыççăн çавăн йышшисене мĕнле чĕнмелле-ши? Акă ăçта иккен вăй питти çулсенчи арçынсен çăлкуç евĕр тапса тăракан вăйĕсене лăплантармалли меслет. Сенкер экран сыхлама, эрех кĕленчи ыталама, йывăр чышкă чăмăртама ăста иккен арçынсем. Çĕр улми миххи çĕклеме, çава туптама вара вĕсене кăнтăр çутинче хăйă çутипе куçлăх тăхăнса та шыраса тупаймăн. Çӳлерех асăннă пур намăссăр пирки те РФ УК 116 ст. уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать. Паллах, пур пӳтсĕре те пĕр харăс асăнаймăн, мĕншĕн тесен вĕсем татах та пур, анчах хĕрарăм çине алă çĕкличчен пуç тавра шухăшласа пăхни пăсмасть.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

**Спорт хыпарĕсем**

## Çамрăксем – сывă пурнăç йĕркишĕн

"Çамрăксем – сывă пурнăç йĕркишĕн" акци пынă май октябрĕн 13-мĕшĕнче ачасемпе çамрăксен специализациленĕ Олимп резервлĕ спорт шкулĕн Муркашри уйрăмĕсем хушшинче усă ăмăрту пулса иртнĕ. Унта 3 уйрăмран (Тойкилтĕ, Муркаш, Çатракасси) 100 ытла вĕренекен хутшăннă. Çĕнтерӳçĕсене 4 ушкăнпа палăртнă. 1997 çулта çуралнă тата унран кĕçĕнрех хĕр ачасемпе арçын ачасем хушшинче Тойкилтĕ уйрăмĕн вĕренекенĕсем Настя Ксенофонтова тата Андрей Петров палăрнă. 1995-1996 çулта çуралнă хĕр ачасемпе арçын ачасем хушшинче Екатерина Герасимова (Тойкилтĕ уйрăмĕ) Василий Никитин (Çатракасси уйрăмĕ) маттуртарах пулнă. 1993-1994 çулта çуралнă яшсемпе хĕрсен ушкăнĕнче Екатерина Албутова тата Роман Емельянов (Тойкилтĕ уйрăмĕ) ăнăçлăрах ăмăртнă. 1991-1992 çулта çуралнă яшсемпе хĕрсен ăмăртăвĕнче Ирина Никитина тата Юрий Михайлов (Муркаш уйрăмĕ) палăрнă. Ăмăртăвăн пĕтĕмĕшле кăтартăвĕпе Тойкилтĕ уйрăмĕ мала тухнă.

---

Районти Тыр-пул уявне спорт ăмăртăвĕсем те илем кӳчĕç. Ял тăрăхĕсен, ял хуçалăхĕсен, организацисемпе учрежденисен физкультура командисем хушшинче мини-футбол выляс, яшсем кире пуканĕ çĕклес енĕпе ăмăртусем ирттересси ырă йăлана кĕчĕç.

Мини-футбол ăмăртăвне Муркашри "Аршин" ООО, Юнкă ял тăрăхĕн, "Оринино" ял хуçалăхĕн, Муркаш шкулĕн командисем хутшăнчĕç. Хĕрӳ ăмăртура "Аршин" ООО команда çĕнтерӳçĕ пулчĕ. Юнкă ял тăрăхĕпе "Оринино" ял хуçалăх командисем иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене пайларĕç. Çĕнтерӳçĕсене дипломсем тата парнесем парса чысларĕç.

Кире пуканĕ çĕклес ăмăртăва пилĕк команда хутшăнчĕ. 60 килограмм йывăрăшлĕ категорире "Герой" хуçалăх представителĕ Алим Андриянов çĕнтерӳçĕ пулчĕ. 70 килограмлă виçере "Оринино" хуçалăхри Сергей Алексеев пĕрремĕш вырăна тивĕçрĕ. 80 килограмлă виçере "Герой" хуçалăхри Андрей Троицкий палăрчĕ. 90 килограмлă виçере "Герой" хуçалăхри Владимир Бардасов çĕнтерӳçĕ пулчĕ. 90 килограмран пысăкрах виçере "Герой" хуçалăхри Валерий Иванов малти вырăна тивĕçрĕ. Çапла вара командăсен ăмăртăвĕнче "Герой" хуçалăх команди пĕрремĕш вырăна тухрĕ. "Оринино" тата Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх командисем иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене пайларĕç. Çĕнтерӳçĕсене дипломсем тата хаклă парнесем парса чысларĕç.

## Благодарность

Выражаем глубокую благодарность коллективам Центральной районной больницы, Кашмашской общеобразовательной школы, родным, близким, соседям, а также всем односельчанам, оказавшим помощь в организации похорон любимого супруга, отца и дедушки Ильина Алексея Ильича.

**Жена, дети, внуки.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления


**В газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» в объявлении о приеме на работу № 86 от 17 октября 2007 г. и №№ 87-88 от 22 октября 2007 г. был ошибочно указан номер телефона 8-903-346-37-42. Общество с ограниченной ответственностью «Виктория плюс» приносит публичное извинение владельцу данного телефонного номера за причиненное беспокойство.**

**ООО «Виктория плюс» приглашает на постоянную работу бухгалтера, экономиста.
Тел.: 8-903-346-37-43.**

**Хура тĕслĕ 10 уйăхри тына пăру сутатпăр.
Адресĕ: Уйкас Янасал ялĕ, Алексеев Геннадий.
Телефонĕ юнашарти пускилсен: 61-5-23.**

**Продаю ВАЗ-21063 1984 г.в., в хорошем состоянии. Бензин А-76, недорого. Тел.: 2-21-41, 8-927-854-96-10.**

**С 26 октября по 4 ноября 2007 года ФГУП «Почта России» проводит Всероссийскую декаду подписки. Предоставляются скидки на подписные издания.
Приглашаем подписаться на печатные издания всех желающих в отделениях почтовой связи.**

**Продаю ВАЗ-2106 1991 г.в. после капитального ремонта. Тел.: 8-927-992-45-90.**

**Январь уйăхĕнче пĕрремĕш пăруламалли хура-шурă тына сутатпăр. Тел.: 33-2-34, 8-919-669-59-22.**

**Продаю автомашину ВАЗ-21053 красного цвета на запчасти (срочно). Тел.: 8-906-136-89-82.**

**Чупнă качакасене сутатăп. Юнкă ял тăрăхĕ, Елкино ялĕ, Сергеев Е.С.**

**Продаю пианино «Сура» в хорошем состоянии. Тел.: 8-905-347-70-20.**

**Куплю бывшие в употреблении мягкую мебель с высокой спинкой, шкаф трехдверный, кровать 1,5 спальный. Тел.: 8-927-841-39-12, 8-927-849-15-17. 1-2.**

**СПУТНИКОВОЕ ТЕЛЕВИДЕНИЕ
8-927-666-93-95
от 3000 рублей.**


Отдел образования, молодежной политики, физической культуры и спорта администрации Моргаушского района и Совет Моргаушской районной организации профсоюза работников народного образования выражают глубокое соболезнование по поводу безвременной кончины повара Панклейской основной общеобразовательной школы

**ЛЕОНТЬЕВОЙ
Галины Ивановны.**

Турайри вăтам шкул коллективĕ кунта директор çумĕ пулса ĕçлекен Зинаида Петровна Григорьеван шăллĕ

**Николай Петрович
ФЕОКТИСТОВ**

вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркашри тĕп больница коллективĕпе профсоюз комитечĕ больницăра нумай çул хушши водитель пулса ĕçленĕ

**Алексей Ильич
ИЛЬИН**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ

**Олег Мефодьевич
СЕМЕНОВ**

водитель нумай вăхăт хушши чирлесе выртнă хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

«Передовик» хуçалăх коллективĕ М.П. Кукушкин тĕп бухгалтерăн ашшĕ хуçалăхра механизатор пулса ĕçленĕ

**Петр Ильич
КУКУШКИН**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Тойкилтĕри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ çак шкулта газооператор пулса ĕçленĕ

**Вячеслав Емельянович
ВИССАРИОНОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.


**ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРŸ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".

**Директор-главный редактор
А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3480.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 23.10.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру ИЛЛАРИОНОВА Р.А.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.